Т. К. Кирилловъ.

# ХОДИТЕ ВО СВѢТѢ.

(ÇУТӐРА ÇӲРӖР).

На чувашскомъ языкѣ.

КАЗАНЬ.
Типографія А. М. Петрова, П.-Влад. ул., соб. д.
1905.

Т. К. Кирилловъ.

# Ходите во свѣтѣ.

(ÇУТĂРА ÇӲРӖР).

На чувашскомъ языкѣ.

КАЗАНЬ.
Типографія А. М. Петрова, П.-Влад. ул., соб. д.
1905.

Цензурою дозволено. Казань, 25 Февраля 1905 г.

# ХОДИТЕ ВО СВѢТѢ.

## (ҪУТӐРА ҪЎРӖР).

На чувашскомъ языкѣ.

Пирӗн патшалӑхӑн пит йывӑр вӑхӑт пурӑнса ирттермелле пулђӗ. Пирӗн тӑван пиђђесем, ывӑлсем, хурӑнташсем пирӗншӗн хӗвел тухӑҫӗнђе хӑйсен йунне тӑкаҫҫӗ. Ађаран хӗрхенекен кӑмӑллӑ хӗр-ађасем те тӑванӗсем асапланнине илтсе тўсеймесӗр вӗсен суранӗсене ҫыхма пухӑна-пухӑна кайаҫҫӗ. Вӗсем те тӑшман йенђен ҫумӑр пек килсе ўкекен пуљккӑсем айне пула-пула вилеҫҫӗ. Ҫапла ађаран пирӗн хушӑра ўссе ҫитӗннӗ ҫамрӑк ҫынсем хӑйсене шеллемесӗр пире тӑшман танатинђен ҫӑлса хӑтараҫҫӗ. Епир халӗ вӗсемшӗн куҫ-ҫул тӑкнӑ пек, пирӗнтен кайран пурӑнакан ађа-пӑђасем те ўлӗм вӗсене Турӑ умӗнђе кӗлӗре асӑна-асӑна куҫ-ҫул тӑкӗҫ.

Анђах епир пурӑнӑҫ тӑрӑшшӗнђе ҫакна та куратпӑр. Пирӗн йалта-йышрах пӗр ҫын макӑрнӑ ђухне тепӗр ҫын пӗри макӑрнӑшӑн хӗпӗртесе кулса тӑрать. Халљхи вӑхӑтра пирӗн патшалӑхра та ҫавӑн пек пулђӗ; ҫар халӑхӗ хӗвел тухӑҫӗнђе патшалӑхри пур ҫынсемшӗн хӑйӗн йунне тӑкнӑ вӑхӑтра усал ҫынсем халӑх пурӑнӑҫне пӑтратма тытӑнђӗҫ. Ӑс ырӑ мар ҫынсем йалсенђе пурӑнакан йӑваш ҫынсене те йӗркесӗр ӗҫ тума хушса тӑра пуҫларӗҫ. Вӗсем пурне те кутӑн ӑс тыттарса патшамӑра хирӗҫ тӑма илӗртеҫҫӗ. Турӑ законӗпе пурӑнакан ҫын ђӗри патшалӑхри йӗркене пӑсас тийекен ҫынсен ӗҫӗсене курса йывӑр хуйхӑпа писет. Усал ҫынсем пирӗн патшамӑрӑн савнӑ тӑванне вӗлернӗ, йӗркесӗр

ĕç тума ҫарӑнмаççĕ, хуласене, йалсене çите-çите халӑха пӑлхатма тӑрӑшаççĕ.

Турӑ панӑ йĕркепе çĕр çинҫи пур ҫунӑн та аслӑ пуçлӑхсене пӑхӑнса пурӑнас пулать, мĕншĕн тесен Турӑ хуман пуçлӑх çук: пуçлӑх пулса тӑракансене Турӑ лартнӑ (Рим. 13, 1-2). Патшамӑра хирĕç тӑни хамӑр ӑспа шухӑшласан та пит усал. Ырӑ çын хӑйне мĕн кирлине ӑшӑ кӑмӑлпа ыйтать. Патша вӑл ыйтнине тумасӑр хӑвармасть. Çав хушӑрах халĕ усал çынсем вӑйпа, вутлӑ хĕç-пӑшалпа хӑйсене кирлĕ пек тума тапратнӑ. Мĕн кирлĕ-ши вĕсене, мĕн шыраççĕ-ши вĕсем, мĕн сахал-ши вĕсемшĕн?— Вĕсем пур те нумайтарах ирĕк пама ыйтаççĕ, сахалтарах ĕçлесе пурӑнса нумайтарах укçа илесшĕн тӑрӑшаççĕ. Вĕсем ĕлĕк талӑк хушшинҫе вун-иккĕ, вун-ултӑ сехет ĕçлесе илнĕ укçана малалла сакӑр сехет ĕçленĕшĕнех илсе пурӑнасшӑн. Вӑрçӑ вӑхӑтĕнҫе кирлĕ йапаласем хатĕрлемелли савӑтсенҫе пĕр ҫарӑнмасӑр ĕçлес пулать-ҫĕ. Халĕ çав савӑтсенҫе ĕçлекенсем ĕçлеме пӑрахса пĕтĕм патшалӑха пысӑк сийене кӳртеççĕ. Çар халӑхĕ тӑшмансене çĕмĕрме хатĕрсем ыйтать, анҫах хатĕрсене тӑваканнисем тумасӑр тӑрса пĕтĕм халӑха макӑртаççĕ. Çар халӑхĕн хатĕрсемсĕр мĕн туса ӑçта кӑйса кĕме пĕлес? Вӑрçӑри салтаксемшĕн тумтирсем, атӑсем кирлĕ. Хĕл, сивĕ; пĕр вырӑнтан тепĕр катари вырӑна утса çитме атӑсем çирĕп кирлĕ. Анҫах кунта хатĕрлекеннисем ĕçлемесĕр тӑраççĕ. Çапла вĕсем Россія ывӑлĕ-хĕрĕсем пулаç-çĕ-и, патша аҫисем пулаççĕ-и? Епир вĕсене патшалӑхри çынсем тесе пурӑнатпӑр. Пур ĕçлекенсем хирĕçнине мĕнне танлаштарма пĕлес, мĕн калас вĕсене? Вĕсем Турра та Ун ирĕкне те маннӑ, патшамӑр кӑмӑлĕнҫе тĕрĕс тӑма приҫак панине, Турӑ çырӑвне ĕненме кирлине ӑшĕсенҫе тытасси çук. Вĕсем нимĕнрен ытла хӑйсем çине шанса хӑйсене ытла асла хуракан пулҫĕç. Ҫӑна, тĕрĕслĕхе пĕлме кĕнекесем вуласа ӑслӑ çынсенҫен ӑс ыйтасси-тӑвасси те пĕр те çук.

Тӑвансем! Çынсене айӑпласа хурласа хамӑра хамӑр ытла мухтама епир хамӑр мĕнле çынсем-ха?! Епĕ малта каларӑм: сусӑрланнӑ салтаксенĕн суранĕсене кунтан

ырă шухăшпа кайнă хĕр- аҫасем ҫыха-ҫыха пулăшу параҫҫĕ терĕм; вырăсла вĕсене „сестры милосердія“—савса пулăшакан хĕрхенекен ҫĕреллĕ аккасем теҫҫĕ. Ку сăмахăма ӳлĕм вăрҫăран таврăнакан салтаксем те каласа парĕс. Анҫах халĕ пăхăр-ха есир, тăвансем: пирĕн йалти хĕр-аҫасем сусăр ҫынсене пулăшма пĕлмелле-и? Пирĕн йала пĕр-пĕр ҫыру пĕлекен ырă ҫын сурансене мĕнле тӳрлетме кирли ҫинҫен калакан кĕнекесем илсе килсен епир укҫамăра шеллемесĕр илсе килнĕ кĕнекесене туйанса йулатпăр-и? Тата халĕ пирĕн пата виҫĕ ҫынна та пулин вăрҫăра суранланнăскерсене илсе килсен, кам та пулин ҫапла калĕ-ши: ах, ку ҫынсене мĕнле те пулсан сыватас-ҫĕ; ку ҫынсен килĕсенҫе арăмĕсемпе аҫисем пулĕ; киле йулнă ҫыннисем нимĕнпе пусарăнаймасăр хуйхăраҫҫĕ пулĕ, тесе кам та пулин ҫирлĕ ҫыннăн йывăрлăхне ҫăмăллатма хăй ҫине йывăр ĕҫ илĕши? Ҫук, пире малтан хамăра сыватмалла-ха. Епир хамăр ҫирлĕ, вăйсăр, тĕрексĕр, наҫар, мĕскĕн, хуралсах ҫитнĕ ҫынсем. Епир тĕнҫере ытти халăх ҫумĕнҫе мĕнле ҫынсем-ши? Епир хамăра хамăр таса тытми ҫынсем, хамăртан ытла никамшăн та тăрăшми ҫынсем. Епир ҫак тĕнҫере мĕншĕн ҫуралса пурăннине пĕлме те шухăшламастпăр. Ҫавăнпа та нумайĕшĕ пире ҫăннипе, тивĕҫлипе ыйхăллăскерсем, хытă ҫĕреллĕскерсем тесе калаҫҫĕ. Пирĕн вăранма кирлĕ, ҫутта тухма кирлĕ. Турă законĕ пирĕн ҫĕрене ҫутатман-ха. Епир Евангеліе йĕркине кĕреймен-ха. Пирĕн хушăра нумайĕшĕ евангеліе тени мĕн тенине те илтмен. Пирĕн хĕр-арăмсем, хĕр-аҫасем ҫине нийепле ҫутă та ӳкмен. Вĕсене епир тĕттĕмрех тытса тăратпăр. Айакри ăслăлăха тухнă халăх хушшинҫи ҫын килсе пирĕн хĕр-арăмсем мĕнле пурăннине курсан хĕрхенсе кулҫанмалла. Епир хĕр-арăмсене тĕттĕмре усранăран пирĕн аҫа-пăҫамăрсем те вăйсăр ҫынсем пулаҫҫĕ. Епир арҫыннисем пит айăплă: хамăр хĕр-аҫасене виҫĕ пус тăракан тĕрĕ ҫумĕнҫе ерни ернипе лартатпăр. Тĕрĕ тума вĕренмен хĕр-аҫаран йалĕпе кулатпăр. Пирĕнтен хамăртан хĕр-аҫасене пахарах ĕҫе вĕрентменшĕн кулмалла. Пирĕн хĕр-аҫасем ҫу каҫиҫҫен тĕрĕ туса виҫĕ

тенкĕ те тупаймаççĕ. Ытти çĕр-шыври хĕр-аҫасем пĕр çурах пурçăн çиппинҫен тутăрсем çыхса йе урăх ĕç туса алă тенкĕ ытла ĕçлесе тупаççĕ. Пирĕн хĕр-аҫасем пĕтĕм çамрăк вăхăта ҫăвашран пуçне нихăш халăх тытман йӳнĕ тĕрĕсем туса ирттереççĕ. Пире аҫамăрсене усăллăрах ĕçе вĕрентменшĕн пит çылăх, мĕншĕн тесен пирĕн аҫапăҫасем сыпăкран сыпăка наҫарланса пырса çук пирки çылăхлă ĕçсем тăвакан пулаççĕ.

Кам та пулин халĕ хĕр-арăмсене: ей Тура ҫурисем! Халех пурсăр та пĕр ăс тытса тăлăха йулнă аҫасене пĕрер çип арласа парăр, тесе каласан, вĕсем çапла калакантан кулкаласа ирттерĕç. Вĕсем халĕ çынна пулăшма мар, хăйсене мĕн кирлине те ĕçлесе тупма пĕлмеççĕ, хăйсем те наҫар. Турă хушнă тăрăх хĕр-арăмсен те пĕр пĕрне пулăшас ĕçре тăрас пулат. Епир сăмахра калатпăр: тĕнҫипе пĕрер çип пухсан, çарамаса пĕр кĕпе пулат, тетпĕр. Анҫах пирĕн сăмаха çавартан кăларса йани анҫах пулат, нихăçан та пĕре каланă сăмахран ĕçе пулса тăмаст. Епир усăллăрах ĕçсене вĕренместпĕр те вара хамăр тĕнҫипе пĕрер çип пухса çӳрес патне çитетпĕр; аҫамăрсене çамрăкла усă кӳрекен ĕçсем тума çул кăтартмастпăр та ĕмĕрĕпех хурлăх курса пурăнмалла тăватпăр.

Ҫăн малтан аҫа-пăҫана школа йарса Турă законне вĕрентес пулат, вулама, çырма, сума вĕрентес пулат, аслăрах школасене йарса тĕнҫе çинҫен, пурăнăç йĕрки çинҫен вĕрентме кирлĕ, кил-çурт тăвасси çинҫен, килти, уйри ĕçсем çинҫен, пахҫа ĕçĕсем çинҫен вĕрентме пит кирлĕ. Çыру пĕлни аҫа-пăҫашăн пурăннă вăхăтра кирлĕ пулат. Упăшки ĕçлĕ çынра тăнă вăхăтра арăмĕ те çыру пĕлнипе нумай усă кӳрет; упăшки çыру çырса йарсан ун арăмĕ çырури сăмаха çынна пĕлтермесĕр хăйех вуласа тухат. Çыру пĕлекен амăшĕ аҫисем ҫирлĕ вăхăтра мĕн тусан самай пулассине пĕлсе тăрат. Çыру пĕлекен çын сутă-илӳ тунă ҫух та аптăрамаст.

Халĕ епир хамăр çыру пĕлмен пирки пуринҫен ытла кирлине пĕлмесĕр йулатпăр. Пуринҫен ытла пĕлме кирлĕ евангеліене вуламан, пĕлмен çын Турă хушнине

вырӑна кӳмесӗр пурӑнаҫ. Тата Турӑ ҫыруне пӗлсен те Турӑ хушнине туман ҫын ҫылӑха кӗрет. Анҫах епир мӗншӗн Турӑ ҫыруне пӗлме тӑрӑшмастпӑр-ши? Салтакра пурӑнакан ывӑлӗ ашшӗ патне ҫыру йарсан, ашшӗ йе тӑванӗ ҫав ҫырӑва ҫасрах хут пӗлекен ҫынна вулаттарса пӑхтараҫ. Салтакра пурӑнакан ҫынӑн арӑмӗ те тӑванӗсем те айакра пурӑнакан савнӑ ҫын мӗн каласа йанине хӑвӑртрах тума тӑрӑшаҫҫӗ. Ырӑ ҫын йуратнӑ тӑванӗн сӑмахне хӑйӗн ҫӗрипе савса илсе вырӑна кӳме тимлет. Ҫав вӑхӑтрах етем мӗншӗн пурне те йуратакан, пурнӑшӗн те ҫывӑхрах тӑракан Турран ҫыруне, евангеліене пӗлме тимлемест-ши? Тӗлӗнмелле, тӑвансем: ҫунпа, ӑспа, ирӗкпе Турӑ йенелле ҫавӑрӑнакан пит сахал. Іисус Христос Турӑ ҫӗр ҫинҫи етемшӗн Хӑй етем пулса килнӗ, пурӑннӑ, вӗрентнӗ, ӗмӗрех асаплӑ вырӑна кӗрсе ӳкес ҫыншӑн хӗрес ҫинҫе Хӑй асапланнӑ. Анҫах етемсем Ун асапӗсене ӗненсе тӑмасӑр, Вӑл панӑ йӗркере тӑмасӑр ӗмӗр асаплӑ вырӑнах ҫывӑхараҫҫӗ. Хаљхи етем Турра манса пыни усал ӗҫӗсенҫен паллӑ. Ку-ҫухне ҫынсем хӑйсене хӑйсем анҫах пурӑнса ырӑ курасшӑн. Хаљхи ҫын: хамӑн лайӑх пурӑнса пултӑр, ыттисем кирек мӗнле пурӑнҫҫӑр, теме пуҫларӗ. Ыттисем те хӑйсем анҫах пурӑнасшӑн: ку ҫын кирек мӗнле пурӑнтӑр, хамӑрӑн савӑнса пурӑнас теҫҫӗ. Епир, ҫылӑхлӑскерсем, пур те ҫаплах шухӑшлатпӑр. Турӑ каланӑ пек пурӑнакан ҫынӑн апла мар калас пулаҫ: епӗ кирек мӗнле те пулин ҫӑтса иртерӗп, анҫах манӑн ҫынсене пулӑшасах пулаҫ, вӗсене пулӑшнӑшӑн Турӑ йуратаҫ, тесе пулӑшасах пулаҫ.

Епир ӗҫӗмӗрсене тӗплӗ, йӗркеллӗ туса пурӑнсан ҫав хушӑрах майӗпе ҫынсене те сӑвапшӑн пулӑшма пултаратпӑр. Акӑ сӑмах сине килнӗ ҫух калам: школара вӗреннӗ ҫын таса кӗнекесем вуласа мӗнле пурӑнма кирлине халӑха та пӗлтерме пултараҫ.

Епир пур те пӗр пӗрне йуратса тӑрсан урӑх тӗлтен те пулӑшма пултаратпӑр. Наҫар ҫын пуйан ҫынна ӗҫ туса парса пулӑшаҫ. Пуйан ҫын ҫук ҫынна услам илмесӗр кивҫен парса ҫӗклет.

Йалти ҫынсем шывсӑр аптӑраса пурӑнаҫҫӗ пулсан,

вĕсене çăл алтса паракан йала пысăк усă кӳрет, хăйĕн сылăхĕсене çăмăллатать. Монастырсенче те чăн-чăнах çăлăнасшăн пурăннă сăваплă çынсем пусăсем (çăлсем) алтса хăварнă, шурлăх çĕрсене канавсем алтса илемлĕ çĕр тунă. Ĕлĕк Іаков йатлă сăваплă çын пĕр уйра çăл алтса кăларнă. Çав çăл темиçе пин çула çитичченех халăха усă кӳнĕ. Вăл çăл Палестинара пулнă Іисус Христос çĕр çинче пурăннă вăхăтра Хăй те çав çăлти шыва ĕçнĕ. Тăвансем, сăвапа пĕлсе халăха усă кӳрес тейекен çын темиçе тĕрлĕ те ырă ĕçсем тума пултарать. Турă çынăн сăваплă ĕçне йуратса илет, Вăл калать: Ман йатăмпа пĕр курка сивĕ шыв ăсса паракан та хăй сăвапне çухатмĕ, (Мө. Х, 42) тет.

Çамрăк ачасем чиркӳре йурлани илемлĕ. Санăн хăвăр йалти ачасене те чиркӳре йурлама вĕрентес килет пулсан, тимлесе вĕрент, ачасене Турра илемлĕ сасăпа кăмăлтан тав-туса аслăлама вĕрент, йалти çынсене те çав ырă ĕç йенне çавăр. Пур те йуратса тăччăр.

Йалти çынсем ачисене кĕнекесем илсе парсан, çамрăк çынсене ӳлĕмрен пысăк усă пулать.

Епир монастырсене укçа йуратса паратпăр, унта пурăнакансене çителĕклĕ пурăнма пулăшатпăр. Тата хамăр килти ача-пăчамăрсене те çителĕклех çыру вĕрентме тытăнас пулать. Епир пур халăх та çителĕклĕ пурăнтăр тесе шухăшланă шухăшăмăра Турă йуратать. Çавăнпа пирĕн пĕчикрен çитĕнекен халăха, çамрăк ачасене усăллă ĕçсем ĕçлеме вĕренме çул кăтартмалла. Епир, чăвашсем çителĕклĕ пурăнма пĕлместпĕр, мĕншĕн тесен çыру пĕлмен пирки усăллă ĕçсем çинчен илтмен. Пирĕн чăваш милліона сух çыру пĕлмен пирки начар пурăнать. Малалла халăх хăватлантăр тесен çапла шухăшлама кирлĕ. Епир пысăкланса ватăлнисем тин çыру вĕренеймĕпĕр: пирĕн вăл вăхăт иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Акă пĕчик ачасем час вĕренеççĕ. Пирĕн малалла вĕсем çине шанса тăмалла пултăр-чĕ, вĕсем усăллă çынсемне курса патшамăра та савăнса пурăнмалла пултăр-чĕ. Епир патшамăрăн ачи-пăчисем пулатпăр. Пирĕн патшамăрăн ачисем тĕрлĕ йатлă: вырăссем, чăвашсем, тутарсем, çармăссем, мордвасем, тата ытти йатлă халăх та нумай.

Вĕсем пур те патшамăршăн савса йуратнă аҫисем пулаҫ-ҫĕ. Анҫах епир йуратнă аттемĕр патшана усă кÿмесен, мĕнле вара йуратнă аҫисем пулăпăр? Епир, ҫăвашсем, пĕр милліон та пулип ырă ăса вĕренме пуҫласан, патшамăршăн та халăхшăн та ăслăрах, усăллăрах ҫынсем нумайланĕҫҫĕҫ, Турă законне тăрăшса вĕрентекенсем пулĕҫҫĕҫ, пур те ырă ҫителĕклĕ пурăнма тĕрлĕ ĕҫсене вĕренĕҫҫĕҫ. Халăх ҫителĕклĕ пурăнни патшамăршăн пит паха. Вăл халĕ халăх пурăнăҫне ҫителĕклĕрех тăвас тесе, мĕн кирлинҫен те туллирех тăвас тесе ҫĕнĕрен ырă йĕркесем кăларат. Епир ырă патшамăр пирĕншĕн тăрăшнине пĕлсе хамăр та тăрăшарах ĕҫлеме тытăнар, мĕнле те пулин лайăхрах пурăнма кĕнекесем, хаҫатсем тăрăх вĕренер.

Ĕҫ пысăкран пуҫланмаст, пĕҫиккĕрен пуҫланат. Халăх малалла кайасси те пĕҫиккĕренех пуҫланат. Пирĕнтен айакри халăхсем ҫакна ĕлĕкех пĕлсе ҫитнĕ. Епир анҫах ăна пĕлмесĕр йулнă. Епĕ сире ăслăланса кайнă халăхсен йаҫĕсене каласа парăттăм, анҫах есир хăшхăш халăх йатне кăҫалҫҫен те илтмен, илтсен те ҫасах манса кайатăр тесе каламастăп та. Анҫах епĕ сире хамăр вырăс халăхĕпе пĕр тăван Чехи тейекен славян халăхĕ ҫинҫен каласа парам. Чех халăхĕ Австрія патшалăхĕнҫе пурăнат. (Епир, тăвансем, хамăр Россія патшалăхĕнҫе пурăннине каламасăрах кашнийĕн пĕлсе тăрас пулат.) Чехсем малтанах пит паҫар, хурлăхлă халăх пулнă. Никам та вĕсем ҫине ăшă кăмăлпа пăхман, пăхма та пит кирлех пулман: вĕсем пур те хăйсене хăйсем хĕсĕнсе, лăпҫăнса, пытанса пурăннă. Вĕсен хушшинҫе ҫыру пĕлекен, сутă-илÿ тăвакан пит сайра анҫах пулнă. Чехсем ҫывăрса пурăнпăран пур те вĕсенҫен мăшкăлама пултарнă. Вĕсем хăйсем те пĕр пĕрипе килĕштерсе пурăнни ҫукран пĕр пĕрне курайман. Кайран пурăнăҫ тăкăсланса пынăҫем тин вара ăс илме пуҫланă. Ҫамрăк аҫасем ҫыру вĕренсе сутă-илÿ тăвакан пулнă. Вăл ĕҫ ак ҫапла пулнă: школаран вĕренсе тухнă аҫасем вĕренменнисене йалтах вĕрентсе кĕнекесем, хутсем, ытти кирлĕрех йапаласем илсе панă. Ҫапла ҫамрăк аҫасен хуш-

шинҫе укҫа выҫама пуҫланӑ. Тата укҫа вӑл хӑш ҫух ҫынна ӑса кӳртет: йӳнерех илсе хаклӑраха сутма вӗрентет. Сутӑ-илӳ тӑвакан ҫын ытти ҫынсемпе паллашкаласа ҫӳресе калаҫма та вӗренет. Мӗнле тусан мӗн пулассине те туйса илекен пулат. Пирӗн йала ҫӳрекен тутарсемех, авӑ, мӗнле хӑйуллӑ: пӗр тутарах пур йала хӑратат. Анҫах чехсен лӑйӑх пурӑнасси малта каланипех тапранса кайман, вӗсем хӑйсем те пӗр ӑслӑ пулса ҫителӗклӗрех пурӑнас тесен мӗн тума кирли ҫинҫен шухӑшлама тытӑннӑ. Чехсен лайӑх пурӑнасси аҫи-пӑҫисенҫен, школасенҫен, школари учителсенҫен пуҫланса кайнӑ. Аҫа-пӑҫа школасене ҫӳреме пуҫланӑ. Пӗҫик, тӑвӑр школасем вырӑнне аслӑрах, пысӑкрах школасем халӑхпа лартнӑ. Пур школасенҫе те учителсем лайӑх вӗрентсе пурӑннӑ. Школа усракан халӑх школа ҫумне аҫисене ҫӗр ӗҫне, пахҫа ӗҫне вӗрентмелӗх йатарса ҫӗр панӑ. Аҫасем ҫуркуннехи вӑхӑтран пуҫласа ыраш вырма тухаҫҫен ҫав ҫӗр ҫинҫе тӗрлӗ ӗҫе вӗреннӗ. Ҫакӑн пек школасем усӑ кӳнине курсан пур халӑх йуратса тата пысӑкрах школасем лартма вӑй пухнӑ. Вара арҫын аҫа анҫах мар, хӗр-аҫасем те хӑйсем валли ӑрасна лартнӑ школасенҫе вӗрене-вӗрене ҫитӗнсен ӑслӑ арӑмсем пулнӑ. Вӑл ҫапла, ҫынсем: арӑмӗ те упӑшки те ҫыру пӗлекен ҫынсем пулсан, икӗ ӑс пӗрле пӗр пурӑнӑҫа аван тытса тӑма пултараҫҫӗ. Анҫах ман сӑмахӑм малалла-ха. Чех ҫыннисем пӗр пӗрне ҫапла ӑса кӳртнӗ: ырӑ ҫынсем, хамӑр вӑй ҫитнипе пурӑнӑҫӑмӑра ҫӗклесрен ҫарӑнса тӑрар мар. Халӗ пирӗн хушӑра ҫыру пӗлекен ҫамрӑк ҫын сахал та пӗлекеннисем халӑх хушшинҫе мухтансарах ҫӳреҫҫӗ, мухтанса ҫӳренипе ӗҫйенне те кирлӗ таранах пӑхмаҫҫӗ. Епир ак мӗн тӑвӑпӑр: пур аҫа-пӑҫана та школасенҫе вӗрентме тытӑнар та пур те ҫыру пӗлекен пулсан кашнийех вара мухтанса ҫӳрес ҫук, ун вырӑнне нумайӗшӗ ӗҫе нумайтарах ӗҫлесе ыттисенҫен ирттерме тапратӗҫ. Вара аҫасен пурӑнӑҫӗ пур йенҫен те ҫителӗклӗрех пулӗ. Ытти патшалӑхсенҫе сывӑ аҫа ҫыру вӗренмесӗр ҫитӗнни ҫук; епир те кашнийех аҫамӑрсене вӗрентер. Хӗр-аҫасене вӗрентме ӑрасна школасем лартар, тепӗ. Акӑ чех ҫыннисем мӗнле

халăх пулнă! Вĕсен ватă стариккисем ăслă пулнă: çамрăк йаш-кĕрĕм асса пурăнасран хамăр урăрах çынсем пулса сыхласа пурăнар, тенĕ. Çапла вĕсем пурăнăçа пур йенђен те йĕркеллĕ тума тăрăшнă. Чехсем халăха Турă çинђен вĕрентме пађăшкалăх, учителсемлĕх хамăр ађасене те вĕрентер, хамăр пĕлсе тăнă çынсене, ађаран таса пурăннисене, лайăх вĕреннисене суйласа хурар, тесе калаçа пуçланă. Вара пурăннăçем мĕн ырра ĕмĕтленнине вырăна кӳме те май пулнă! Вăхăт иртсе пынă хушăра ăслă чехсем пур çĕрте те тата канашланă: ытти çĕр-шывра ђиркӳсем патне пађăшкăсем, учителсем хатĕрлемелли школасем пур; епир те хамăр вăйпах кирлĕ школасене лартар, тенĕ. Вара чехсем пĕре тунă канаша тимлесех вырăна кӳме май шыранă.

Чех халăх пурăнăçĕ ырăланса пынă. Халăх ырра тухма татах ăс шыранă: „ытти халăхсем", ~~тенĕ~~: „çĕр ĕçне те тӳрлетсе ăнтарса пыраççĕ, мĕншĕн тесен мĕнле тусан аван пулмаллине кăтартмалли школасем лартса пĕтернĕ. Епир те вăй çитерсе çавăн пек пит усăллă школасем лартар", тенĕ: „Тата çынсен суккăрсем, уксахсем, сусăр çынсем пурăнма больницасем кирлĕ таранах, докторсем, фельдшерсем (леккăрсем) пур çĕрте те аван ĕçлеççĕ. Пирĕн ăна та хамăр çине шансах нумайлатма пит кирлĕ", тенĕ.

Чех халăхĕ çапла сăмах саракансене малтанах йуратман, вĕсене мăшкăласа ухмах çынсем тенĕ; тыта тыта сута пама та ђарăнсах тăман: „вĕсен ĕмĕрĕ касаматра!" тесе пĕтернĕ. Анђах ватă ăслă çынсем çамрăксене ђарнă. Ватă çынсем çапла каланă: есир, çамрăксем, мĕнле вара, пĕлместĕр-и мĕн: мирпе-тĕнђипе тунă ĕç хăçан пулманни пур, тăвас, ађасем, халăхшăнах усăллă пулĕ. Пирĕнтен авалхи çынсем каланă: халăх сурат те кӳлĕ тăват, пĕр çын сурни анђах типсе пырат.—Халăх ђул çурт лартнă, теççĕ, пĕђђен пĕр йуман та касайман, теççĕ. Ей тăвансем, тенĕ: пуçтарăпăр укçа кам вăй пур таран панине. Пире Турă та савса пулăшĕ, тенĕ. Вара чехсем школасем лартма укçа çапла пухнă: кам çулта-

лăкра ерех, сăра ĕçсе вун тенкĕ пĕтерет, ăна школасем лартнă çĕре те вунă тенкĕ хуртарнă; кам хăй çуккипе çулталăк хушшинче ерех-мĕн çирĕм пуслăх анчах ĕçет, унтан çавăн чухлĕ илнĕ. Ерех те сăра та ĕçмен çынсем усă кÿмелли ĕçшĕн пуринчен те нумайтарах хунă. Старикcем ĕçекеннисене çапла каласа ĕнентернĕ: ерехрен вунă тенкĕлĕх ĕçсен те усси курăнмасть, ерех вăл хуйхă тăванĕ, ерех ĕçсен ăслă çын ухмах пулать, сывă çын чире йерет, тенĕ: ача-пăчамăра усăшăн укçана ăна ерехпе пĕтернинчен ытларах хума та чарăнса тытăнса тăма кирлĕ мар, тенĕ. Чех халăхĕ хушшинче ăслă çынсем нумай пулнă, анчах вĕсене тÿсеймен çын та халăх çинче сахал пулман. Çапах халăх хушшинче ватă çынсене итлесе тăраканcем ăслă ватăсемпе пĕр канашлă пулса хирĕçекеннисене çапла пусарнă: есир ватăсене мĕншĕн итлеместĕр-ха: вĕсем вĕт хамăршăнах тăрăшаççĕ, пире ырă çунаççĕ, çын ăшне кÿртме майлаççĕ. Хальччен тваравари халăх пирĕнтен кулса мăшкăласа пурăнать, ăслă çынсем пире çав мăшкăлтан тасалма ăса кÿртеççĕ, ма итлес мар вĕсене?! Ватă çынсем çамрăксене ăс пани кули лайăх мар, тенĕ.. Пĕр çын халăх пухăвĕнче çапла каласа тăнă: акă епех нумай вĕренсе аслă ĕçе кĕрем те вара мана пурăнма хĕн пулать-и. Халĕ тутар та манран тăвансем умĕнчех кулса тăрать. Епĕ нумай вĕреннĕ пулсан, халĕ манран кулаканcем йунашар лартса калаçĕччĕç. Çавă вара маншăн усал пулать-и? Çук, ниçта тухса çÿремен, вĕренмен çын вăл ырăлăха ниçта та нихăçан та курас çук, тесе шавласа тăнă. Çапла шавласа тăнă вăхăтра тепĕр çын тăнă та укçа хутаççине çÿлелле çĕклесе кăçкăрса каланă: „итлĕр, çынсем; епĕ хам савнипе виçĕ тенкĕ укçа хутаçăмран кăларса паратăп“, тенĕ. Ун хыçĕнчен камăн укçа пурри пур те кăлара кăлара пĕр ватă çын аллине панă. Пĕр вăхăтрах школа лартмаллăх укçа пухăннă. Кĕркуннене çитсен, йалти ачасем сывăха лартнă школа хĕпĕртесе çÿренĕ. Школа сывăхра майĕпе йурлă çынсем те ачисене çÿретме пултарнă. Вара пĕр çичĕ-çакăр çул хушшинче йалта хут пĕлмен çам-

рӑк ҫын йулман; ҫитĕнсе ҫитнисем те школа ҫӳрекенсенҗен килтех ыйта ыйта вĕреннĕ.

Кĕҫĕн школасем хыҫҫӑн аслӑрах школасем те халӑх вӑйĕпе халĕ кунта, халĕ тепĕр ҫĕрте шӑтса ҫиҗĕннĕ. Пысӑкрах школасенҗе Турӑ ҫинҗен те нумайтарах пĕлме пулнӑ; тата ҫĕр ĕҫне тĕплĕрех тума, сутӑ-илӳ тума, пахҗа ҫимĕҫĕсем тума, йывӑҫсем, сиплĕ курӑксем лартса җĕртме вĕрентнĕ. Леккĕре тухмалли школасенҗе емел тума пĕлнĕ. Тата ытти тĕрлĕ ĕҫсене те усӑ пулассине пĕлсе шатах ҫав тĕрлĕ школасенҗе туса тӑнӑ. Чехсем пур халӑхпа пĕр ӑслӑ пулса җӑн аслӑ школасем те лартма пултарнӑ. Вара вĕсен аҗисем те аслӑ школасенҗе вĕренсе тухса халӑха нумай усӑ кӳнĕ. Халĕ чех ҫыннипе кирек кам та ӑшшӑн калаҫса ĕҫ тӑват, никам та сасартӑках хӑратса пӑрахса ӑсран йамаст. Чех ҫыннин халĕ сутӑ-илӳ ĕҫĕ те малалла пырат, уйĕнҗе те тырӑ-пулӑ хулӑн пулат: чехсем уйсене ҫĕнетме пĕлеҫҫĕ. Чех халӑхĕ пекех, ĕлĕк авал грексем, нимĕҫсем, акӑлҗансем, француссем, финсем наҗартан пурлӑха тухнӑ, ыйхӑллӑ ӑсран малтан мала кӑтартса пыракан ӑса кĕнĕ, нумай вӑхăт вĕренсе ҫителĕклĕ мар тулли пурӑнма та айӑпсӑр илемлĕ ҫулсем тупнӑ. Халĕ епир ҫавӑн пек халӑхсем ӑслӑласа кӑларнӑ вутлӑ кимĕсем, пароходсем, карапсем ҫинҗе хӑш җух май килсен ларса ҫӳретпĕр.

Пирĕн те тӑвансем, тӑрӑшас пулат. Ҫын мĕн җухлĕ пуйан, мĕн җухлĕ ӑса вĕренет, ҫавӑн җухлĕ ӑна пурӑнма лайӑх. Ĕҫе тĕлне пĕлсе ĕҫлекен никама айӑп тумасӑрах, ҫылӑха кĕмесĕрех пурӑлӑх курат. Халĕ епир хамӑр пĕлмен пирки йе ҫынна хĕстерсе ҫылӑха кĕрсе пуйан пуласшӑн ĕмĕре ирттеретпĕр, вилсен те асаплӑ вырӑнах кайатпӑр. Тĕрлĕ усӑллӑ ĕҫе вĕренес тесен малтан хут аван пĕлме кирлĕ. Германія патшалӑхĕнҗе халĕ ҫĕр ҫын хушшинҗе тӑхӑрвун сакӑр ҫын ҫыру пĕлет; ҫыру пĕлменни ҫĕр ҫынтан икĕ ҫын анҗах йулат. Унта кашни ҫынах тĕнҗере мĕн пулнине пĕлсе тӑрат. Нѣмецсем вĕсем ӑса вĕренесрен, ĕҫлесрен җарӑнса тӑмаҫҫĕ, пур ĕҫе те ĕҫлеме пĕлеҫҫĕ. Вĕсем җаваш ҫинҗен те хамӑртан ытла пĕлеҫҫĕ.

Ниçта нимӗнле усӑллӑ ӗçсене вӗренмен çын йывӑр ӗçӗпе те тӑранса пурӑнма çитерейместь, çиме çук пирки çылӑхлӑ ӗçсем патне пырса тӗртӗнет. Ӗçе пӗлсе тӑвакан ырӑ çын çылӑха та сахалтарах кӗрет; вӑл ӗçленӗ вӑхӑтра хӑй ҫӗринҫе ҫуна çӑлмалли кӗлӗсем вулаť. Çавӑнпа ҫӑвашсен те çынсеренех школара вӗренсе тухнӑ çынсем пулма кирлӗ. Епир ватӑ çынсем ватӑлса çитрӗмӗр, çамрӑкран çитӗнекенсем пурин те усӑллӑ ӗçсене вӗренме çул уçса паракан школасенҫе ӑс илес пулаť. Пурин те кӗнекесем иле-иле вулас пулаť, çӗнӗрен тухакан кӗнекесене пурне те пӗрер те пулин илсе йаланах ал айӗнҫе тытас пулаť: пушӑ вӑхӑт пӗр минут та пулин килсенех алла кӗнеке тытса вулама кирлӗ. Кӗнеке вуланӑ хыççӑн ӗçе те ҫасрах тытас килет, ӗçленӗ вӑхӑтра та тӑрӑшарах ӗçлес килет. Çакна пӗлсе ӗнтӗ хӑш-хӑш йалсенҫе çыру пӗлекен çынсем пур те кӗнекесем, хаçатсем илсе вулама тимлеççӗ. Епир те хамӑра хамӑр çутта кӑларма, пурӑнӑçӑмӑра малалла йама шухӑшлар, икӗ аллӑмӑра нихӑçан та çурӑм хыçне тытса ӗçсӗр çӳрер мар. Пур халӑх малалла кайтӑр тесен, ман ватӑ çын ӑсӗпе хамӑр пӗлсе вуламалли хаçат кӗнеки кирлӗ, пӗлмелле хаçаť çинҫе каланине арçынни, хӗр-арӑмӗ, ватти-çамрӑкки пур те пӗлӗҫҫӗç. Пур халӑх малалла кайтӑр тесен ҫӑн малтан кашни çынӑн ӗçҫен ҫӗреллӗ, пӗлсе пыракан тӗплӗ ӑслӑ пулма кирлӗ. Хаçат пире мӗнле ӗçлесе пурӑнӑçӑмӑра çителӗклӗ тума кӑтартса парӗҫҫӗ. Епӗ ватӑ çын çапла шухӑшлатӑп: халӑх вӑл пӗрер çынтан пухӑнаť; урама пӗр çын та тухмасан йал хушшинҫе халӑх пулмасť. Çавӑн пек, кашни çын ӗçҫене, ӑстана тухсан тин вара пур халӑх ӗçҫене, ӑстана тухса кайаť. Епир пур те аслӑ школасенҫе вӗреннӗ çынсем пулсан, Турӑ законӗпе пурӑнсан, халҫхи пекех выçса аптӑрамӑттӑмӑр. Пур те çителӗклӗ пурӑнакан пулӑттӑмӑр. Епир савӑнса хӗпӗртесе çителӗклӗ пурӑнни Турра та йурӑхлӑ: Вӑл пирӗншӗн пӗтӗм тӗнҫене хӗвелӗпе те çутатаť, çумӑрӗпе те шывараť, темиçе тӗслӗ тырӑ-пулӑ ӳстерет, выҫӑх-ҫӗрлӗх валли темиçе тӗслӗ курӑк параť, çӗр айӗнҫе ылттӑнпа кӗмӗл, тимӗрпе хурçӑ, ахахсем, хаклӑ йышши

ҫулсем туса хунӑ. Турӑ ҫынӑн апаҫӗ-ҫимӗҫне тутлӑ тума тӑварне те кирлӗ таранах панӑ, вӑрманне, шывне те панӑ. Анҫах пирӗн Турӑ панӑ ырӑлӑхпа пурӑнас тесен, малтан Турӑ патшалӑхне шырас пулаҫ, ҫунӑмӑрсене таса усраса пуҫӑмӑрти ӑсӑмӑрпа йӗркеллӗ шухӑшлас пулаҫ. Ҫӗр ҫинҫе Турӑ панӑ йӗрке пулмасан пӗр пӗрне вӗлерсе те пӗтерӗҫҫӗҫ. Турӑ панӑ йӗркене патша пӗлсе сыхласа тӑраҫ. Вӑл пире ырӑ йӗркепе пурсӑмӑра та ҫителӗклӗ пурӑнӑҫпа усрасшӑн тӑрӑшаҫ. Епир хамӑра хамӑр патшамӑр кӑмӑлӗнҫе лайӑх тытса тӑни уншӑн та хамӑршӑн та ырӑ, хамӑра хамӑр ырӑ ӑса кӳртсе пурӑнӑҫӑмӑра ҫӗклени пире тӗрлӗ усалтан сыхласа усраҫ. Епир малалла ҫутӑрах ӑса тухсан тутарсем те пире хӑйсем йенне ҫавӑрас ҫук, Магомедӑн суйа тӗнне пирӗн куҫ умӗнҫе хитрелетес ҫук, пире улталаса ӳт астарнӑ хыҫҫӑн йарас ҫук. Патшалӑхри халӑх Турӑ панӑ йӗркене тытса тӑракан пулсан, патшамӑра хирӗҫ пӑлхатакан усал ҫынсем те хӑйсен канашне кӳртес ҫук.

Ей Турӑ, етемӳсене ҫӑл, Хӑвӑн халӑхна ырӑ курмалла ту; ҫӑн тӗне тытса тӑракан пирӗн аслӑ Патшана Николай Александровича тӑшмансене ҫӗнтерме вӑйхӑват пар, патшалӑхна Хӑвӑн Хӗресӳ хӑваҫӗпе усра.

ЦѢНА 4 КОП.